Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

82 (7399) № ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи сентябрĕн (авăн) 30-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ыран – Ватă çынсен кунĕ

**ХАКЛĂ ВЕТЕРАНСЕМ!**
**Сире Ватă çынсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ ячĕпе саламлатăп!**

Эсир хăвăра тăван çĕр ырлăх-пурлăхĕ пуянрах пултăр тесе шеллемен. Сирĕн ĕçри çитĕнӳсем Чăваш Республикин тата Раççейĕн мухтавлă страницисене çырăнса юлнă. Эсир паян та стройра: çамрăксене хăвăрăн пĕлӳпе хаклă опыта паратăр, хăвăрăн тĕслĕхпе республикăн çамрăк çыннисенче ăс-хакăл вăйĕн, ĕçченлĕхĕн, патриотизмăн туйăмне çирĕплететĕр.

Патшалăхпа обществăн тивĕçĕ – сире тивĕçлĕ пурнăç условийĕсем туса парасси, тимлĕх уйăрасси. Ку енпе пирĕн республика Раççейĕн ытти регионĕсем хушшинче ăнăçлăрах вырăнта. Пенсисемпе пособисене вăхăтра тата туллин тӳлесе тăраççĕ. Ватă çынсене квалификациллĕ пулăшу паракан медицина тата социаллă учрежденисен хисепĕ ӳсет. Чăваш Республикинче вăрçă ветеранĕсем валли хальхи оборудованипе тивĕçтернĕ клиника госпиталĕ ĕçлет. Аслă ăру çыннисенчен нумайăшĕ хăйсен сывлăхне республикăри тата унăн тулашĕнчи чи лайăх санаторисенче çирĕплетеççĕ.

Сире пархатарлă ĕçшĕн тата тăван ен юратăвĕшĕн çĕре çити пуç таятпăр. Сирĕн пурнăç энергийĕ, опыт тата пĕлӳ Чăваш Республикине Раççейĕн пĕрлехи аслă çемйинче вăйлăрах пулма майсем туса парасса шанса тăратăп.

Сире çирĕп сывлăхпа ăнăçу сунатăп.

Нумай çул телейлĕ пурăнмалла пултăр!

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н.В. ФЕДОРОВ.**

***Ватă çынсене çавăн пекех Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕсем А. АКСАКОВ тата П. СЕМЕНОВ саламлаççĕ.***

**ХИСЕПЛĔ ĔÇПЕ ВĂРÇĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ, ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ХАКЛĂ ВАТĂСЕМ!**

Ыран Ватă çынсен кунне уявлатпăр. Районта пурĕ 11 пин те 81 пенсионер пурăнать. Сирĕн хушăра Аслă Отечественнăй вăрçăра Тăван çĕршыв ирĕклĕхне хӳтĕленĕ, Аслă Çĕнтерĕве çывхартассишĕн тылра ырми-канми вăй хунă ватă çынсем те сахал мар. Вăрçă хыççăн та сирĕн пурнăç çăмăл пулман: халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн кунне-çĕрне пăхмасăр вăй хунă, çĕршывăмăр çирĕп те хăватлă пултăр тесе тимленĕ. Тавах сире нимпе танлаштарма çук паттăрлăхăршăн. Сирĕн умăрта эпир çĕре çити пуç таятпăр. Паянхи çамрăк ăру сирĕн умăрта ĕмĕрĕмĕр парăмра.

Хисеплĕ çыннăмăрсем! Эсир нихăçан та йывăрлăхсем умĕнче пуçăрсене усман. Çирĕппĕн малаллах утнă, вăй хунă. Сирĕн пуян опытăр пирĕншĕн çав тери хаклă. Эпир сирĕнтен вĕренсе, йывăрлăхсене чыслăн çĕнтерсе пыма тивĕçлĕ.

Районти ветерансен канашĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи пуян опытлă ватă çынсен канашĕ, вĕсен усăллă сĕнĕвĕсем пире ĕçре пулăшса пыраççĕ, малалла çул кăтартса параççĕ, çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ. Кун-çулăр вăрăм, ватлăхăр канлĕ килтĕр тесе, эпир хамăртан килнине йăлт тăвăпăр.

Сире пурне те Ватă çынсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатăп. Çывăх çыннăрсен ăнланăвĕ, чун ăшши пурнăçăра лăпкăлăх кӳтĕр.

**Район пуçлăхĕ**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

## Ватă çынсен кунĕ умĕн

# Тимлĕх ытларах пултăрччĕ

***Пĕрлештернĕ нацисен организацийĕн Генеральнăй Ассамблейи 1990 çулта йышăннипе октябрĕн 1-мĕшĕнче Раççейре кăçалхипе вун пиллĕкмĕш хут Ватă çынсен пĕтĕм тĕнчери кунне паллă тăваççĕ.***

***Пирĕн çутă пуласлăхшăн ырми-канми тăрăшнă, ĕçленĕ. Паян вара тивĕçлĕ канура вĕсем. Районта хальхи вăхăтра ватăсене мĕнле пулăшусем параççĕ, ватă çынсен кунне мĕнле палăртаççĕ, çакăн тавра калаçма ыйтрăм эпĕ ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçинчен Н.П. ПЕТРОВАРАН.***

**– Нина Пантелеевна, Ватă çынсен кунĕ тĕлне районта мĕнле ĕçсем тума палăртнă?**

– Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунне эпир ытти çулхи пекех тĕплĕн хатĕрленсе ирттерме палăртрăмăр. Ку тĕлĕшпе ятарлă ĕç планĕ йĕркелерĕмĕр. Эпир пĕччен ватăсен пурнăç условийĕсене, вĕсем хĕле мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслессине, ватăсен çурчĕсенчи ватăсене чыслассине йĕркелетпĕр. Сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсенче ĕçлекенсем тухса çӳрекен поликлиника йĕркелесе ватă çынсен сывлăхне тĕрĕслесе медицина пулăшăвĕ параççĕ. Районти мунчасенче ватăсене тӳлевсĕр мунча кĕртеççĕ. Куç курманнисен пĕрлешĕвĕ “Манăн пахча – манăн савăнăç” конкурс ирттерме палăртнă. Çавăн пекех тата ытти мероприятисене кĕртнĕ.

Эпир ытлари кун район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи старейшинăсен канашĕпе ветерансен канашĕн пĕрлехи ларăвне ирттертĕмĕр. Унта ватă çынсен кунне ирттересси пирки те калаçу пулчĕ.

**– Ветерансен çурчĕсенче тата ĕçсем мĕнле пыраççĕ?**

– Районта пирĕн Турай, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенче ватă çынсен çурчĕсем вырнаçнă. Вĕсенче 15-шер ватă пурăнать. Йӳçкассинчи вара республика шайĕнче шутланса тăрать. Унта 50 çын пурăнать. Вĕсене эпир пăхсах тăратпăр. Пур ветерансен çурчĕсенче те ватă çынсен кунне тивĕçлĕ шайра ирттерме палăртнă. Вĕсен ертӳçисем ватă çынсен канлĕ пурнăç пултăр тесе чылай çул вăй хураççĕ. Халĕ унта хĕле хатĕрленес тапхăр пырать. Çĕр улми, пахча çимĕç çителĕклĕ янтăласси, çуртйĕре юсаса ăшă тытса хăварасси.

**– Кăçал ытти çулхисем пек адреслă пулăшу парассине палăртнă-и?**

– Çапла, халĕ эпир ку ĕçпе тĕплĕ ĕçлетпĕр. РФ Пенси Фондĕнчен сахал тупăшлă, пĕччен пурăнакан ватăсене адреслă пулăшу пама 72 пин тенкĕ укçа куçрĕ. Ăна эпир 76 çын валли уйăртăмăр тата 12 пĕчĕк пенси илекен ватăсене РФ Пенси фондĕнчен 16 пин.

ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствинчен 37 пин тенкĕ куçрĕ, пĕчĕк пенси илекен 74 пенсионера 500-шер тенкĕ пама пăхрăмăр. Çитес кунсенчех тивĕçлисем çак укçана илĕç.

**– Юлашкинчен мĕн калана пулăттăр?**

– Паянхи пурнăç никамшăн та çăмăл мар. Çакă уйрăмах ватăсене пырса тивет. Паянхи ватăсем пирĕн пекех, хăйсем ĕçлеме пултарнă çулсенче, вăй-халне шеллемесĕр, сывлăха пăхмасăр тăрăшнă. Çавăнпа та хуçалăхсен, предприяти ертӳçисене хăйсем патĕнче вуншар çул ĕçленĕ ветерансене май пур таран тимлĕх, пулăшу уйăрса çак куна тивĕçлĕ шайра туса ирттерме ыйтас килет. Кая хăварсан каю шăтать тенĕ пек ан пултăрччĕ. 29, 30, 1-мĕшĕсенче ватăсене чыслама ыйтасшăн. Çакă хамăра ырăпах таврăнĕ.

Юлашкинчен районти мĕн пур хисеплĕ ватăсене пурне те уяв ячĕпе саламланă май вĕсене канлĕ ватлăх, çирĕп сывлăх, ялан кил ăшшине туйса пурăнма вăрăм кунçул сунатăп.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

## Пĕрлехи ларуран

# Ватăсене хисеплер, сĕнĕвне ăша хывар

Паянхи ватăсем иртнĕ çулсенче тĕрлĕ отрасльсенче чылай вăхăт хушши ырим-канми ĕçленĕ. Вĕсем вăрçă çулĕсем хыççăн ял хуçалăхне ура çине тăратма нушаланнă. Халĕ вĕсем тивĕçлĕ канура пулин те обществăлла ĕçсенче активлăхпа палăраççĕ. Район пурнăçĕпе унăн аталанăвĕ аслă ăрушăн çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче район администрацийĕнче старейшинăсен тата ветерансен канашĕсен пĕрлехи ларăвĕ иртрĕ. Кунта ĕçпе вăрçă ветеранĕсен вырăнти канашĕсен ертӳçисемпе ялсенчи хисеплĕ ватăсем хутшăнса калаçрĕç.

Ларăва район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пычĕ. Пухăннисене район экономикипе социаллă пурнăçĕ кăçалхи сакăр уйăхра мĕнле аталаннипе паллаштарчĕ, ял хуçалăх, промышленноç, суту-илӳ тата ытти ĕçе тишкерчĕ.

– Çанталăк лайăх еннелле улшăнни уй-хир ĕçĕсене самай хăвăртлатнă. Тĕштырă пухса кĕртесси пĕтнĕпе пĕрех ĕнтĕ. Паянхи куна çĕр улми пуçтарасси япăх мар пырать. Ку ĕçре шкул ачисем активлăхпа палăрса тăраççĕ.

Пĕлетĕр, ял хуçалăхĕнче укçа-тенкĕ тумалли тĕп çăл куç выльăх-чĕрлĕх отраслĕ пуç пулса тăрать. Анчах та хăш-пĕр хуçалăхра кун пирки сахал шутлаççĕ, çителĕклĕ таран тимлĕх уйăрмаççĕ. Çакă вара район аталанăвне самай каялла туртса пырать. Ку вара чи япăххи, – пĕлтерчĕ Юрий Александрович пухăннисене.

Çавăн пекех Ю.А. Иванов ĕç укçине вăхăтра тӳлесси тата унăн калăпăшĕ çинче чарăнчĕ, строительство ĕçĕсемпе те паллаштарчĕ. Паянхи кун çивĕч ыйту – çĕр пайĕсене харпăрлăха куçарасси. Ку ĕçре ял халăхĕн ăнланманлăхĕ е васкаманлăхĕ çав тери пысăк куторĕ Ольга Васильевна.

Паянхи кун тĕрлĕ çăмăллăхсене укçапа улăштарасси социаллă пакет пирки нумай çыраççĕ, калаçаççĕ. Çакă вăл питĕ кăсăклă ыйту, чылай ăнланманлăх, иккĕрăнчĕ. Çакна пурнăçлама вăхăт çав тери сахал юлчĕ. Çавăнпа та тĕплĕн шухăшласа ĕçе хăвăртлатма ыйтрĕ. “Паян тăвас ĕçе ырана хăварас марччĕ. Çĕр пайĕсем çине алă сулни, ыран укçа çăл куçĕсĕр, пурнăç тыткăчисĕр юлни пулать, – терĕ. Ю.А. Иванов пурне те Ватă çынсен кунĕ ячĕпе саламласа, çирĕп сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунчĕ.

Ватă çынсен пĕтĕм тĕнчери кунне халалласа нумай ĕç тума палăртнă. Вĕсемпе тĕплĕн социаллă пулăшу паракан центр ертӳçи О.В. Иванова паллаштарчĕ.

– Çынсем тивĕçлĕ канăва хăш предприятирен тухнă, вĕсене çав ĕç вырăнĕсене чĕнсе чыслама ыйтрĕ. Тĕл пулусем аслă ăрăвăн кăмăлĕсене çĕклеччĕр, хавхалантарччăр. Çавăн пекех концертсем те пулмалла, – ленӳлĕх çуратать. Пухăннисене çак йĕрке çинчен РФ Пенси фончĕн Муркаш районĕнчи управленийĕн ертӳçи Е.М. Александрова тĕплĕн каласа ăнлантарчĕ.

Районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн ертӳçи М.В. Виноградова пухăннисене ăшшăн саламларĕ. Вырăнти ватăсене хисеплесе уяв кунне чыслăн ирттерме сĕнчĕ.

Сумлă ватăсем хăйсен шухăш-кăмăлĕсене палăртрĕç, чун ыратăвĕсене пайларĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: ĕçре пултарулла та хастар ватăсем – социализмла ĕç геройĕ О.Ф. Федорова, ветерансен районти канашĕн ертӳçи М.В. Виноградова тата Г.Н. Толстова.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Ĕç çи – 2006

### Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче çĕр улми кăларса пуçтарас ĕç мĕнле пынине кăтартни

**(сентябрĕн 29-мĕшĕ тĕлне кăларнă, процентпа)**

| | |
|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 55 |
| ООО «Волга» | 100 |
| «Восток» | 100 |
| «Герой» | 100 |
| ЗАО "Агро-Урожай" | 80 |
| К. Иванов яч. хис. | 48 |
| Ильич яч. хис. | 77 |
| ЗАО «Колос» | |
| Ленин яч. хис. | 76 |
| ООО АФ «Лидер» | 53 |
| ООО «Нива» | |
| «Оринино» | 100 |
| «Передовик» | 46 |
| «Свобода» | 79 |
| «Сеятель» | |
| Суворов яч. хис. | 77 |
| ООО АФ "Рассвет" | |
| ОАО АФ "Нива" | |
| «Ударник» | 75 |
| «Хлебороб» | |
| Чапаев яч. хис. | 86 |
| «Чемеево» | 63 |
| Чкалов яч. хис. | |
| Районĕпе | 66 |

## Юбилей

### Саламлатпăр

Хаклă мăшăра, аттене, асаттене, ĕçтешĕмĕре – Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăха кĕрекен Купăрля ялĕнче пурăнакан **Василий Николаевич НИКОЛАЕВА** октябрĕн 1-мĕшĕнче 65 çул тултарнă ятпа чĕрери ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Эс пурри пире пурнăç çулĕпе çирĕп утма хавхалантарать. Малашлăха пăхса, хăвăн хисепе тивĕç ятна çӳллĕ шайра тытса пыма хистет. Сан ăшă кăмăлу, ырă чĕрӳ, çемьене те, хуçалăха та ялан пулăшма хатĕр пулни пире пурăнма вăй-хăват парса тăрать.

Эс утас кун-çулу такăр, ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху çирĕп, пурнăçу тулăх пултăр. Санăн пурнăç пархатарĕ, ырă кăмăл нихçан та ан иксĕлччĕр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем тата Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ĕçченĕсем.**

Юнкă ял тăрăхне кĕрекен Канаш выççăлккинче пурăнакан юратнă мăшăра, ырă кăмăллă аннепе хунямана, ăшпиллĕ асаннене тата кукамая **Анна Тихоновна ХЛЕБКОВАНА** 60 çул тултарнă ятпа пĕтĕм чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Ĕçре ирттернĕ пурнăçна хисеп туса сана татах нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр. Эс пурри пирĕн пуянлăх, сан куллу пирĕн телей. Тайма пуç сана, анне, пире çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнишĕн, йывăрлăхсенче пулăшнишĕн тата пулăшма ялан хатĕр пулнишĕн.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕсем, кинĕпе кĕрĕвĕсем, мăнукĕсем.**

Юратнă аннене, кукамая – Мăн Шашкар ялĕнче пурăнакан **Фаина Петровна СОКОЛОВАНА** 85 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.

Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

Сана çак юбилей ячĕпе саламланă май малашне те çирĕп сывлăх, ăнăçусем, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем.**

Анаткасси ялĕнче пурăнакан пирĕн юратнă мăшăра, аннене, хаклă асаннене, хунямана – **Раиса Викторовна АЛБУТОВАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн хисеплесе саламлатпăр. Эс пурри – пирĕн савăнăç, телей. Малалла та пурнăçăн анлă çулĕпе утса тухма çирĕп сывлăх, телей сунатпăр.

**Салампа мăшăрĕ, виçĕ ывăлĕ, виçĕ кинĕ, мăнукĕсем, вĕсен тăванĕсем, хăти-тăхлачисем.**